# ЛАЗАР СИЛИЧИ

*Албани Халăх Республики*

## ÇĔНĔ ÇУЛ

Куçа куççульпе йӳçĕ тĕтĕм касать.
Ак тепĕр Çĕн çул... Вăл пире мĕн
парать?
Çак сакă çинче ашшĕ чĕлĕм туртатчĕ,
Теприн çинче — ывăл вулатчĕ ялан...
Мĕн чухлĕ хĕрарăмăн вăйĕ-хăвачĕ?
Мĕн чухлĕ кĕтейĕ-ши вăл, мĕн таран?
Ответ илтĕнмест. Пур тĕнче те шăпах.
Вучах вутти çех шартлатать пĕр шайпа.
Анчах алăкран ту çинчи çил кĕрет,
Çав çил урăхла калаçса витерет.
Вут йăл хыпрĕ те, амăш илтрĕ сăмах:
„Куççуль кунĕ мар, кулянмашкăн пăрах.
Эп — Çĕнĕ çулталăк, эп — йывăр ĕç, терт,
Эп — сивĕ те выçлăх, эп — юн та синкер.
Анчах, юратушăн чĕр юн юхмасан,
Ăçтан юрату çĕнтерейтĕр, ăçтан?“

Миçемĕш Çĕн çул ку шаккать алăка?
... Е, вилнĕ пулсан тахçанах упăшка?..
Çаплах тӳсмелле-ши хуйха та шара?
... Е ывăл пĕтсен... Кам тавăрĕ вара?

Миçемĕш тискер вăрçă хĕлĕ çаплах
Хĕрарăма йӳç тĕтĕмпе асаплать?
Миçемĕш хутчен Çĕнĕ çул алăкран
Ăна пăшăлтатĕ-ши вăрттăн: „Эс шан!"
Декабрьте мар килчĕ вăл, çĕрле мар,
Вăл çитрĕ ирхи шуçăмпа юнашар.
Вăл çитрĕ тăн-тăн партизан аттипе,
Винтовка тытса ывăнми аллипе.
Вăл килчĕ йышпа, — ав отряд çывхарать;
Пур çĕлĕк çинче хĕрлĕ çăлтăр çунать.

Тапак тултарать упăшки чĕлĕмне:
„Çук, амăш, пуртех таврăнмарĕç килне,
Асилĕпĕр хамăр çĕнтернĕ чухне
Çав хамăршăн вилнĕ тăван-туссене".
Вучах умĕнче аллине ăшăтать
Ун ывăлĕ, вăл — урăхла калаçать:
„Çĕн пурнăç сырми[1] çĕршыва сарăлать,
Вăл халь пирĕн ял çумĕпех ыткăнать.
Ту урлă, вуншар хула урлă вĕçсе
Çӳреççĕ çĕмрен пек хивре поездсем.
Албани илтет — пăравус кăшкăртать:
Çĕн пурнăç станцийĕ час çывхарать!
Тухса кĕтсе илĕр килен поезла, —
Вăл çутă телей патнелле çул тытать".
Вара амăш хушрĕ сăмах ерипен:
„Çил мар — ирĕк пурнăç килет ту çинчен!"

1 Албанире 1949 çулта çамрăксем тунă шоссе